**Ҫӗнтерӳ – ир акнинче**

Ирхи сывлăм ырă, уҫă,
Ытӑлас килет ҫӗре.
Пит хавассăн та, пит уҫҫăн
Савăнать хастар чӗре.

Лăпкă ҫилӗ кассăн-кассăн
Вăшăрхать кăнтăр енчен.
Ирлеле тухса пăхсассăн,
Пӗлӗт шăлтах — кӗленче.

Паян ир хире васкарăм,
Чӗрем туртăнчӗ унта.
Ах, епле пурте хастаррăн
Тăрăшсах ӗҫлет кунта.

Бригадир — Курак Шарушкин,
Тухнă пуринчен малтан.
Ак, курап, тата пӗр ушкăн
Васкаса килеҫ ялтан.

Вуник касă акаканӗ
Га ҫине ӳкнӗ тӳрем.
Вăхăтсăр ларса кам канӗ,
Кам пăрăнӗ ҫак ӗҫрен?..

Кӗрлесех шавларӗ трактор,
Колхозниксемпе пӗрлех.
Уй илемӗ — хурҫă паттăр —

Ун илемĕ — ĕмĕрех!

Ăмăртса ĕçлет бригада
Колхозла çуракинче.
Рапорт çитĕ Мускава:
«Çĕнтерӳ — ир акинче!»

1934

*Бараев, В. Çĕнтерӳ – ир акинче : [сăвă] // Бараев, В. Сӳнми хĕлхем / В. Бараев. – Шупашкар, 1961. – С. 23-24.*